

# 2019 çулта 9 класс пĕтерекенсене чăваш чĕлхипе патшалăх шайĕнче тытмалли тĕп экзамента сочинени çырма хатĕрлесси

*Егорова А.С., Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕн чăваш чĕлхипе литератури кафедрин доценчĕ*

# Ăслав сочиненине хакламалли критерисем

| Сочинени содержанийĕ | |
|---|---|
| **Ача çырнă ĕç сĕннĕ темăпа тӳр килни** | |
| Сочинени содержанийĕ сĕннĕ темăпа тӳр килет. | 2 |
| Сочинени содержанийĕ сĕннĕ темăпа тӳр килет, анчах çырнă текстра темăран пăрăннă 1 вырăн пур, тата/е 1 факт йăнăшĕ тĕл пулать. | 1 |
| Сочинени панă темăпа тӳр килмест (е ача ĕçĕнче темăран пăрăннă 2 е ытларах вырăн пур, е 2 е ытларах факт йăнăшĕ тĕл пулать). | 0 |



# Ăслав сочиненине хакламалли критерисем

| Сочинени содержанийĕ | |
|---|---|
| **Шкул ачин шухăшĕ палăрни** | |
| Текст авторĕсен позицине йышăнса е хăй шухăшне хӳтĕлесе шкул ачи хăйĕн позицине уçăмлă кăтартать. | 2 |
| Шкул ачин шухăшĕ палăрни | 1 |
| Вуланă тата итленĕ текстсем пирки шкул ачи хăй шухăшне каламасть е хăй позицийĕ çинчен ячĕшĕн çеç *Эпĕ авторсемпе килĕшетĕп. Эпĕ авторсемпе килĕшместĕп* йышши предложенисем çырса çырлахать. | 0 |



# Ăслав сочиненине хакламалли критерисем

| Сочинени содержанийĕ | |
|---|---|
| **Сочинени пуплевĕн ăслав тĕсне тÿр килни** | |
| Сочинени пуплевĕн ăслав тĕсĕпе тÿр килет: текст тĕп шухăша (тезиса) пăхăнать, ку шухăша çирĕплетме сахалтан та 2 аргументпа усă курнă (аргументсем ачан хăйĕн пулма пултараççĕ, тата/е вĕсене ача экзаменра итленĕ е вуланă текстсенчен те илет). | 2 |
| Сочинени пуплевĕн ăслав тĕсĕпе тÿр килет: текст тĕп шухăша (тезиса) пăхăнать, анчах 1 аргументпа кăна усă курнă тата/е шухăшлав тытăмне пăснă вырăнсем пур (аргумент тезиса çирĕплетмест, ĕнентерÿсен ярăмĕнчен чи пĕлтерĕшлине сиктерсе хăварнă, пĕр-пĕрне хирĕçлекен аргументсем пур т.ыт.те). | 1 |
| Ăслава пăхăнман текст хайланă. | 0 |



# Ăслав сочинение хакламалли критерисем

| Ăслав сочиненине пуплев енчен йĕркелени | |
|---|---|
| **Шухăш пĕр пĕтĕмлĕхĕ, пуплев çыхăнулăхĕ тата шухăшсене йĕркипе уçса пыни** | |
| Ĕçре логика йăнăшĕсем çук; шухăшсем логика енчен çыхăнса пынине кăтартма вырăнлă чĕлхе мелĕсемпе усă курнă; абзацсем уйăрнă чухне йăнăшсем туман. | 2 |
| Ĕçре логика йăнăшĕ 1 тĕл пулать, тата/е логика çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе усă курнă чухне 1 йăнăш янă; тата/е абзацсем йĕркеленĕ чухне 1 йăнăш тунă. | 1 |
| Ĕçре логика йăнăшĕ 1-рен ытла пулать, тата/е логика çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе усă курнă чухне 1-рен ытла йăнăш янă; тата/е абзацсем йĕркеленĕ чухне 1-рен ытла йăнăш тунă. | 0 |



# Ăслав сочиненине хакламалли критерисем

| Ăслав сочиненине пуплев енчен йӗркелени | |
|---|---|
| Пуплев тӗрӗслӗхӗ, уçăмлăхӗ | |
| Шухăша тӗрӗс те ăнланмалла уçса памашкăн шкул ачи йышлă лексикăпа, тӗрлӗ грамматика хатӗрӗсемпе усă курнă. | 2 |
| Ачан сăмах пуянлăхӗ пур, анчах пӗрешкел грамматика хатӗрӗсемпе вӗçӗмсӗр усă курни сисӗнет. | 1 |
| Сăмах çӳпçи чухăн, пӗрешкел грамматика хатӗрӗсемпе вӗçӗмсӗр усă курнă. | 0 |



# Асра тытăр!

| | |
|---|---|
| **Сочинени çырса пухнă пĕтĕм балл сумми (С1–С5 критерисемпе)** | **10** |

***Сочиненире 1-мĕш (итленĕ) тата 2-мĕш (вуланă) текстсене тепĕр хут каласа панă е çырса илнĕ пулсан – кун пек ĕçе нуль балл лартса хаклаççĕ.***

# 14.1.

***«Тăван халăх телейĕшĕн тăрăшакансем»*** **темăпа калăпăшĕпе пысăках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр. Экзаменра итленĕ тата вуланă текстсен информацийĕпе усă курăр. Тема пирки хăвăр мĕн шухăшланине уçса парăр.**



# 14.2.

**Вуланă текстра палăртнă *«Тăван чĕлхе – халăхăн аваллăхĕ, тăван чĕлхе халăхăн сумлă та телейлĕ малашлăхĕ»* шухăша уçса парса калăпăшĕпе пысăках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр. Вуланă текстран илнĕ икĕ аргументпа усă курăр.**



# 14.3.

***Тăван чĕлхемĕр*** **сăмах майлашăвне Эсир мĕнле ăнланатăр? Хăвăр панă определение уçса парăр. *«Мĕн вăл тăван чĕлхемĕр (туслăх, тăван чĕлхе, çынлăх, ăнланулăх, ырă кăмăллăх, илем)?»* темăпа калăпăшĕпе пысăках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр. Икĕ аргументпа усă курăр: пĕри – вуланă текстран, тепри – пурнăçран пултăр.**



# *Ăслав тытăмĕ*

***Ăслав – япала е пулăм ҫинчен шухăшласа тунă пĕтĕмлетӳсен ярăмĕ.***

***(Мĕншĕн? )*** ***(ҫавăнпа)***

| Тезис | 2 аргумент | Пĕтĕмлетӳ |
|---|---|---|



# Ăслав схеми

## Тезис

*Мĕншĕн çавăн пек*

*Мĕншĕн тесен*

1-мĕш аргумент

2-мĕш аргумент

**Пĕтĕмлетсе мĕн калама пулать?**

## Пĕтĕмлетӳ



# Мĕн вăл тезис?

– **хускатнă ыйту çине хурав калăплани;**
– **хушнă ĕçре панă сăмаха ăнлантарни, уçса пани;**
– **ăславра ĕнентермелли шухăш.**

*– Ĕçе (задание) тепĕр хут вуласа тухăр. Мĕнле сăмах пирки ăслав çырмалла? Çав сăмаха текстра тупăр. Контекст мĕнлереххине сăнăр. Çак сăмах текстра мĕнле пĕлтерĕшлĕ?*



# Тезиса калăплани

– ***Тăван чĕлхемĕр (туслăх, юрату, çынлăх, ăнланулăх, ырă кăмăллăх, сăпайлăх, илем)*** **тенине эсир мĕнле ăнланатăр? Çак сăмахăн определенине парăр (ăнлантару словарĕнчи пек пулмасан та пултарать).**



**Сочинение Эсир хăвăр панă определенирен пуçлама пултаратăр. Вăл шăпах Сирĕн тезис пулать те.**

# Сăмахпа (сăмах майлашăвĕпе) ĕçлетпĕр

Синонимсем
(чĕлхе тата пуплев)

Антонимсем

Эпитетсем
(…. мĕнле пулать?)

Фразеологизмсем, ваттисен сăмахсемпе каларăшсем

# Кластер çыратпăр

*Тăван чĕлхе*




Тăван чĕлхемĕрçĕм *Мĕн ?*
Асаттесен пилĕ
Анне юрри
Пичче вĕрентĕвĕ
Йăмăкăн ачашлăвĕ
Асаннесен тупи
Кукаçейсен тилмĕрĕвĕ
Кукамайсен пехилĕ
Аппа такмакĕ
Атте ӳкĕчĕ
Аппа такмакĕ


Тăван
чĕлхемĕрçĕм
*Мĕнле?*
Ырă
Çепĕç
Илемлĕ
Сăнарлă
Авалхи
Çивĕч
Пуян


Тăван чĕлхемĕрсĕм
*Мĕн тавать?*
Илĕртет
Вĕрентет
Упрать
Ачашлать
Хавхалантарать
Çĕклет
Пиллет

# Шухăшлатпăр

***…вăл – ….***
***Манăн  шухăшпа (эпĕ шухăшланă тăрăх ), … вăл – …***
***… тесе … калама пулать.***
***… вăл, манăн шухăшпа, ….***

***… тесе çавна калама пулать, кам …***

***… тесе … калама пулать.***



# Аргумент мĕн вăл?

Аргумент – тезиса ĕнентерме пулăшакан ĕçсемпе пулăмсем, фактсем, тĕслĕхсем, ăнлантарнисем т.ыт.те.

Аргументсене экзаменра итленĕ тата вуланă текстсенчен илме юрать. Хăвăр курни-илтни, унччен вулани çине таянма та май пур.



# Сочиненин тĕп пайĕ

**Аргументсене** сочиненин **тĕп пайĕнче** илсе памалла, тезисра хускатнă шухăша малалла аталантарса пымалла:

Сочиненин тĕп пайĕнче акă мĕн-мĕн пулмалла:

- хускатнă ыйту çинчен текст авторĕ мĕн шухăшланине (автор позицине) палăртни;
- каланă кашни шухăша ăнлантарни (комментари пани);
- харпăр хăй шухăшне пурнăç опычĕ, обществăра тата тата илемлĕ литературăра тĕл пулакан тĕслĕхĕсем çине таянса палăртни *(ку шухăш текст авторĕн шухăшĕпе тӳр килмесен те пултарать)*.

# Ӑславӑн ӗнентерӳ мелӗсем

- кӳртӗм сӑмахсем
- ыйтупа хурав пӗрлӗхӗ
- пиркепе следстви, условипе следстви, тӗллевпе услови, хирӗçлев çыхӑнӑвне палӑртакан чӗлхе мелӗсем

# Сочиненири аргументсем

| | |
|---|---|
| **14.1.** | Вуланă тата итленĕ текстсенчен цитатăласа е предложени номерне кăтартса илнĕ пĕрер аргумент |
| **14.2.** | Текстран цитатăласа е предложени номерне кăтартса илнĕ икĕ аргумент |
| **14.3.** | Пĕри – вуланă текстран, тепри – пурнăçран. |



# Аргументсене сочиненире мĕнле кăтартмалла?



| | |
|---|---|
| **Предложени номерне скобкăсăр кăтартни** | *10-мĕш предложенире шăпах çак шухăша уçса панă.* |
| **Предложени номерне скобкăра кăтартни** | *Тăван чĕлхене маннă çынсене ялта хисеплемен (10-мĕш предложени).* |
| **Предлжение номерне палăртмасăрах цитатăлани (чарăну паллисем çинчен манса каймалла мар)** | *Аслашшĕсен чĕлхине пĕлмен чăваш мĕскĕне тухнă, маннине – шелленĕ, телейсĕр тесе шутланă, пĕлес темене – айван тенĕ, юратманнине – ылханса ятланă тесе палăртать Г.Волков..* |
| **Чĕлхе пулăмĕсене палăртса цитатăлани** | *Тăван чĕлхене автор «чун енчĕкĕнче ылтăн-кĕмĕл пек шăнкăртатакан пуянлăхпа» танлаштарать (сăпатлантарупа палăртать, эпитетсемпе усă курать….)* |
| **Предложени номерне скобкăсăр кăтартни, цитатăн уйрăм сăмахĕсене кавычкăна илни** | *11-мĕш предложенире Г. Волков тăван чĕлхе – халăхăн «аваллăхĕ», «сумлă та телейлĕ малашлăхĕ» пулнине палăртнă.* |

# *Асăрхăр!*



Ялан ***автор*** сăмахпа усă курасран ăна урăх сăмахпа ылмаштарăр:

- ✓ ***Публицист*** сăмахпа (публицистика стилĕпе çырнă текст пулсан);
- ✓ ***Писатель, çыравçă*** сăмахсемпе (илемлĕ стильпе çырнă текст пулсан);
- ✓ ***вăл*** местоименипе;
- ✓ текст авторĕн ячĕпе тата хушамачĕпе.

# Асра тытăр!

Ăслав сочиненийĕсенче пысăк
вырăн йышăнаççĕ:

- **Кӳртĕм сăмахсемпе предложенисем**
- **Пăхăнуллă союзсем**



# Кӳртĕм сăмахсемпе предложенисем

| | |
|---|---|
| **Шухăша пĕтĕмлетекеннисем** | Çапла вара, кĕскен каласан, пĕтĕмлетсе каласан, апла пулсан, эппин |
| **Шухăш сыхăнăвĕн йĕркине палăртаканнисем** | Пĕрремĕшĕнчен, иккĕмĕшĕнчен, виççĕмĕшĕнчен, пĕр енчен, тепĕр енчен, чăн малтан, юлашкинчен |
| **Шухăш камран е ăçтан тухнине палăртаканнисем** | Пирĕн шухăшпа, эпĕ шутланă тăрăх, тĕпчевçĕсен шухăшĕпе, автор шухăшĕпе, çыравçă палăртнă тăрăх |
| **Аргументлаканнисем** | Акă, тĕслĕхрен, сăмахран |

# Пăхăнуллă союзсем

| | |
|---|---|
| **Пирке** | ***мĕншĕн тесен (ма тесен), тесе*** |
| **Тĕллев** | ***тесе*** |
| **Тĕллевпе условИ** | ***тесен*** |
| **Услови** | ***пулсан, енчен, эхер, ытах. тĕк*** |
| **Килешӳ** | ***пулсан та, пулин те, хуть*** |

# Аргументласа пăхар-ха…

*…çак предложенисем уçса параççĕ.*

*Тĕп шухăш … сăмахсенче*

*ятĕнче*

*çак предложенисенче*

*çак пайсенче*

*пытарăннă.*



# Текстран аргумент илсе пăхар-ха…

***Г.Н.Волков çырнă текстра …***
***Каланине ĕнентерме …-мĕш предложение илсе пăхатпăр.***
***…-мĕш предложени …. шухăша çирĕплетет.***
***Ку шухăша …Г.Н. Волков текстĕнчи ..-мĕш предложенипе çăмăллăнах ĕнетерме пулать.***
***Сăмахран, панă текстри сăнар тыткаларăшне (калаçăвне, хăтланăшне)***
***тишкерсе …калама***
***(курма, туйма) пулать.***



# Пурнăçран аргумент илсе пăхар-ха…

Хамăр пурнăçра та эпир …. тĕслĕхсене сахал мар куратпăр. Сăмахран, …

… кунĕнче (шкулта, библиотекăра, музыка шкулĕнче) пире çавăн пекрех пулăм (ĕç, истори) çинчен каласа пачĕç.

Хамăн ачалăхран эпĕ çакăн пекрех ĕç синчен аса илетĕп.

Унсăр пуçне, манан шухăш тĕрĕссине литература (обществознани, истори, физика, биологи, географи) учебникĕсенчи тĕслĕх те ĕнентерсе парать.



# Сочинени пĕтĕмлетĕвĕ

**Пĕтĕмлетÿ – аргументсем çине таянса тата тезиспа çыхăнтарса пĕтĕмлетни.**

***Çапла вара, …***
***Апла пулсан, …***
***Каланине пĕтĕмлетсе, … палăртмалла (палăртас килет).***
***… тесе шухăшлатăп.***
***…. шанас килет.***
***…. çакăн пек шухăшсем çуралчĕç.***



# Ача çырнă ĕç

Мĕн вăл тăван чĕлхемĕр?

Тăван чĕлхе вăл — асатте-асанне, кукаçи-кукамай вĕрентĕвĕ, атте-анне ăшши, питĕ хаклă ылтăн. Тăван чĕлхе вăл — çĕр пин юрă, çĕр пин сăмах, çĕр пин тĕрĕ, пĕтĕм Ялана пек. Хăвăн тăван кĕтес-рен тарма алхасма кайсан та, тăван чĕлхене манма юрамаç.

Акă, Г. Н. Волков çырнă текст тăрăх 9-мĕш упражненин çак ыйтăва ĕнентерсе парать.

Пурнăçра та, чăвашла калаçма вĕренсе анасем ют çĕршывсене кайса килмен те, хăйсен тăван чĕлхине манса кайма пуçтараççĕ.

Çавна пулсан, тарти курăнма кайсан та хăвăн тăван чĕлхин чун ăшĕнче пытса хăвармалла. Тăван чĕлхине манса кайсан, хăвăн атте-аннене манса кайнипех пулать. Тăван чĕлхе малашлăхĕ пирĕнтен килет.



# Экзаменра ăнăçу сунатпăр!